8/8
36-35



И. Н. Давыдӑв

# Ача-пӑча вӑййисем

Чӑвашсен Патшалӑх Издатӗлстви ◆ 1936 г.

И. Н. ДАВЫДĂВ

# АЧА-ПĂЧА ВĂЙĂИСЕМ



ЧĂВАШСЕН
ПАТШАЛĂХ ИЗДАТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР — 1936

# УМСĂМАХ

## ПИОНЕР ВОЖАТĂЙĔСЕМПЕ ВĂЙĂ ОРГАНИЗАТĂРĔСЕНЕ

Ача-пăча выљама йуратаť. Вăйăра вăл вăй пухаť, çирĕпленет; вăйă тăрăх коллектив ĕçне йавăçма, хутшăнма вĕренет; дисциплинă, йĕрке картине кĕрет; вăйăра ача-пăчан пĕлĕвĕ сарăлса ўсет, вăл кирлĕ, усăлă йапаласем çинчен пĕлет; вăйăра ача-пăча коммунисла воспитани илет, коллективпа пурăнма вĕренет.

Çавăнпа та вăйăн пахалăхĕ çителĕклĕ вырăнта пулмала.

Çак кĕнекери вăйăсене ача сачĕсенче, ача площадкисенче, пионерсен пуххисенче ачасем хаваслансах выљанине шута илсе пухнă.

Кашни вăйă тăрăх ача сачĕсенче ĕçлекен воспитатĕлсемпе, ачасене пĕлекен çынсемпе (педагогсемпе, педологсемпе) канашланă; вăйăн пахалăхĕпе çитменлĕхне тишкĕрнĕ. Çак çул тата иртнĕ çулăн вĕçĕнче тухнă кĕнекесене пăхса тухса пухнă, çапла вара сборнике çĕнĕ вăйăсем те (челљускинцăсем т. ыт. те) чылай кĕнĕ.

Анчах çак кĕнекепе усă курас текенсен, вăйă иртерекенсен—вожатăйсен, ача сачĕсенчи руководитĕлсен çакна асра тытмала:

1. Ачасемпе выљас умĕн кашни вăйăна мĕнле иртересси тăрăх план туса кирлĕ хатĕрсене пурне те шута илсе тĕплĕн хатĕрленмеле.

2. Пўлĕм тата кирлĕ инвентарсем хатĕр пулмала. Пўлĕмре уçă, таса сывлăш пулмала, урайĕнче тусан ан пултăр.

3. Вăйăна мĕнле выљамалине лайăх пĕлмеле. Ачасене вăйă çинчен лайăх ăнлантарса памала. Вăйă çинчен каланă чух пĕр ачана кăна мар, пурне те илтĕнмеле лайăх ăнлантарса памала.

4. Илтĕнмеле калаçса кирлĕ çĕрте алăпа йе выљаса кăтартса ăнлантармала.

5. Руководитĕл, вожатăй пĕр-пĕр тивĕçсĕр ача йе ушкăн хутне кĕни килĕшӳсĕр—вăл вожатăй авторитетне çухатаť, ачасен хушшинчи атмосферăна пăсаť.

6. Вăйă ытла нумай вăхăтчен пыни те йурăхсăр—ачасем ывăнса вăйăран тухса пыраççĕ. Йĕркелĕ пуçласа йĕркепе выљамала, йĕркепе пĕтермеле.

7. Вăйă иртнĕ хыççăн пӳлĕме йĕркене кĕртсе тасатмала, инвентарсене пухмала т. ыт. те.

8. Чупса çӳремели вăйăсем (подвижные игры) таса сывлăшра—плошчадкăра йе килкартинче пулса иртмеле. Анчах йаланах плошчадкăра иртерме май çук, мĕншĕн тесен сивĕ кунсенче (Целçипе 10—12 градус ытла сивĕ, çумăр, вĕçтерекен çил т. ыт. те пулсан) вара çав вăйăсене те пӳлĕмре иртерме тӳрĕ килет. Кун пек чухне пӳлĕмре 12—15 градус ăшă пулмала. Çуркуннепе кĕркунне чӳречесем уçă пулмала, хĕлле фортăчкăна уçмала, тусана нӳрлĕ шăпăрпа шăлмала.

9. Чупса çӳремели вăйăсене апат çийеччен йе апат çинĕ хыççăн пĕр-ик сехет иртсен выљамала. Шкултан тин кăна тухнă хыççăн, чупса çӳремели вăйăсем иртерсен усăлăрах пулаť. Каннă кунсенче канлĕрех, йăвăр мар вăйăсем иртермеле.

Вăйăра ачасен пултарулăхĕ, пуçарулăхĕ, фантазийĕ анлăнах сарăлса пыраť—çакна йаланах асра тытса тăмала.

---

# ИК-ВИҪӖ ҪУЛХИ АЧАСЕН ВӐЙӐЙИСЕМ

## 1. ПОЙӐС

Ачасем пӗр-пӗрин хыҫҫӑн тӑрса аллисемпе умри ачасен хулпуҫҫийӗсенчен тытаҫҫӗ,ӑна пойӑс теҫҫӗ. Пур ачасем те вакунсем пулаҫҫӗ. Малти ача—пӑравус. Станцӑ ӑҫтине малтанах палӑртаҫҫӗ.

Воспитатӗлницӑ свисток парать, пӑравус чашкӑрма пуҫлать, пойӑсӗ йерипен шума тытӑнать, шунӑҫемӗн хӑвӑртланать. Станцӑна ҫывхара пуҫласан йерипенленет, ҫитсен чарӑнать.

Пойӑс иртес ҫул ҫине вӑрӑм тата лутра тенкелрен кӗпер хывсан аван. Кӗпер ҫийӗпе пӑравус йерипен иртет. Вакунсем татӑлсан авари пулма пултарать. Ҫавӑнпа йӗркене воспитатӗлницӑ тирпейлет.

## 2. УЛМА ПУХНИ

Урайне (йе плошчадкӑ ҫине) улма тӑкмала. Кашни ачана кашӑк памала. Ачасен улмана кашӑкпа ӑсмала. Ик ҫулхи ачасем улмана алӑпа илсе кашӑк ҫине хураҫҫӗ. Ӗҫре кӑшт хӑнӑхнӑ аслӑрах ачасем улмана кашӑкпа ӑсса илме тӑрӑ-

шаççĕ. Кашăка сылтăм алăпа тытса ачасем пӳлĕмĕн тепĕр вĕçне (йе плошчадкăн пĕр хĕрне) илсе кайаççĕ те, хатĕрлесе хунă савăт çине пăрахаççĕ.

Улмана кăларса пухса пĕтеричченех ачасем калле-малле хутлаççĕ.

Ачасен улмана пĕр ӳкермесĕр савăт патне çитермеле. Пĕчĕк ачасем утса çӳресе ĕçлеççĕ, пысăкраххисем хăвăрт утса йе чупса çӳреççĕ.

Улмана пухса пĕтернĕ хыççăн ачасем татах выљас тесен, вăййа çĕнĕрен пуçлама йурать.

Улма вырăнне чул, йĕкел йе чăрăш йĕкелĕ илме йурать.

# ВИÇ-ТĂВАТĂ ÇУЛХИ АЧАСЕН ВĂЙĂИСЕМ

## 3. АЕРОПЛАНСЕМ

Вăйă пуçланас умĕн ачасене вĕçсе иртекен аеропланпа паллаштармала.

Пур ачасем те—аеропланусем. Аеропланусен йаланах ларакан вырăнĕ (ангарĕ) пур—ачасем çавăнта пухăнаççĕ. Воспитатĕлницă çигнал панă хыççăн, аеропланусем (ачасем) хăлаçланса вĕçсе тухаççĕ те (плошчадкăра, пӳлĕмре), вĕçсех çӳреççĕ. Ачасен пĕр-пĕрне лекмеле (сĕртĕнмеле) мар. Воспитатĕлницă çигнал парать, аеропланусем кайала ангарăна (вырăнне) таврăнаççĕ.

Ачасем выљас тесен, вăйăна çĕнĕрен тăсма йурать.

## 4. АВТОМОБИЛ

Ушкăн ача—автомобил. Ултă ача алăран-алла тытăнаççĕ: пĕри—умра, аллисем хыçалала, сылтăмпа сулахай айккинче икшер ача пулаççĕ. Улттăмĕш—хыçалта тăраť.

Воспитатĕлницă: „Автомобил иртет, васкаť, хытă пыраť, тра-та-та-та-та!“—тесе пĕлтерет. „Пăрăнăр, пăрăнăр, пăрăнăр!“ Ачасем (автомобилсем) чупма пуçлаççĕ.

Ытти ачасем—çуран çӳрекенсем, автомобил айне лекес мар тесе, çул парса иртеççĕ. Анчах авари пулкалатех. Авари пулсан, автомобил чарăнма тивĕçлĕ.

Ку вăйă ваљљи пысăк плошчадкă (йе аслă пӳлĕм), ирĕк вырăн кирлĕ.

## 5. ЙАÇЛИ

Ачасем йаçлине пухăннă (вырăнне малтанах хатĕрлесе хумала). Вĕсем йаçлинчен тĕрлĕ ĕç тума: хăшĕ йалавсемпе утса çӳреме, коњкисемпе йарăнма, плошчадкăра выљама тухаççĕ (ачасем вăйăсене хăйсен ирĕкĕпе суйласа йышăнаççĕ). Плошчадкăна тасатаççĕ: кĕреçесемпе йур хыранçи пулаççĕ, хырнă йура çуна çине тултарса кайса тăкан пекки тăваççĕ т. ыт. те.

Ĕçеем пĕтсен, киле таврăнаççĕ.

## 6. КУЙАНСЕМ

Пур ачасем те—куйансем. Вĕсем сăрт çамки çине пухăнса лараççĕ. Воспитатĕлницă: „Хир вар-

ринче, куйанёсем сăрт çинче, ťаппиcене хускатса ăшăтса лараççĕ“—теr. Ачасем воспитатĕлницă калана майĕн сиккелеççĕ, аллисене хускатаççĕ.

Кăшт вăхăт иртсен, воспитатĕлницă (ун хыççăн куйанёсем те): „Сивĕтсе кайрĕ, капла ларсан шăнатпăр; часрах ăшăнас тесессĕн хытăрах сиккелер“,—теççĕ. Ачасем сăрт çинчен чупса анса сиккелеме тытăнаççĕ, урисемпе тапăртаткалаççĕ. Ăшăнса çитсен, çигналпа каллех сăрт çине пухăнаççĕ.

Ачасем выљас тесессĕн, вăййа çĕнĕрен пуçлама та йураť.

## 7. ÇĂМĂР ВИТĔР

Воспитатĕлницă ачасене пухса çапла калаť: „Ачасем, аťăр уçăлма тухса çӳрер. Кољă, Вољă, Зоњă (ачасен йачĕсене каласа тухаť)—пурте кайар! Пурте кунта?! Ну, карăмăр! у-у-х, пăчă. Йерипен утар! Ан васкăр! Йерипен, йерипен! Пăхăрха, хура пĕлĕтсем шăваççĕ,—çумăр пулаť. Васкарах утар. Хăвăртрах, хăвăртрах, васкарах. Тата хăвăртрах! Акă çумăрĕ те ӳккеле пуçларĕ!“

Воспитатĕлницă зонтикне караť те: „Чупар хăвăртрах! Васкăр, васкăр, чупар, чупар, чупар! Ах, канав! (ачасем çĕре ӳкеççĕ). Часрах тăрăр, чупăр, чупăр, чупăр! Акă киле çитрĕмĕр те! Ну, мĕнле—йĕпенмерĕр-и?“—тесе ыйтаť.

Ачасем хаваслăн кулаççĕ: „Манăн çӳç йĕпеннĕ“, „манăн çурăм йĕпе“, ‚‚манăн алă“, — теççĕ ачасем.

## 8. ХĔРЛĔ ОБОЗ

„Епĕр лаша кӳлетпĕр, станцăна тырă леçетпĕр“,—тесе пĕлтерет воспитатĕлницă. Ачасем икшерĕн тăраççĕ. Малта тăракан лаши аллине хыçала йарат̆, вăл аларан хыçри—йамшăк тытат̆. Лашасен мăйĕсене хĕрлĕ йалавсем çакнă; малта пыракан лаша мăйĕнчен шăнкăрав çакнă. Воспитатĕлницă хушнипе обоз çула тапранат̆. Виçтăвата ĕрет плошчадкă тавра çаврăнсан, воспитатĕлницă: „çитрĕмĕр“, — тет, вара обоз чарăнат̆. „Тырра вакунсен ăшне пушататпăр, вакунсем хулана иртеççĕ“,—тет воспитатĕлницă.

Ачасем пойăс пулаççĕ. Воспитатĕлницă звонок парат̆, пăравусĕ кăшкăртат̆, пойăс тапранат̆. Кăшт кайсан, воспитатĕлницă: „çитрĕмĕр!“—тесе пĕлтерет, пойăс чарăнат̆.

Вăйă чарăнсан тырра ăçта ăсатни çинчен пĕчĕк калаçу пулат̆.

Ачасем тата выљас тесен, иккĕмĕш обоза йĕркелемеле.

## 9. КОНВЕЙĔР

Епĕр ачасене коллективпа ĕçлеме, стройкă тума сĕнетпĕр. Ушкăн ача воспитатĕлницăпа пĕрле пăрахут, савăт, т. ыт. йапала та тума пултарат̆. Стройкă пуçланат̆. Ачасем конвейĕрпа стройкăна кирпĕч парса тăраççĕ. Ачасем ĕретпе (хушши пĕр метр) тăрса тухаççĕ. Чи хыçалта тăракан ача шкапран (йе арчаран) кирпĕч илсе иккĕмĕшне парат̆, иккĕмĕш—виççĕмĕшне, виççĕмĕш—тă-

ваттăмĕшне... Вĕçĕнчи кирпĕчсене йĕркелесе хураť—стройкă хăпараť.

Кирпĕчсем йĕркепе, тикĕс иртнине сăнасах тăмала. Ачасем часах хăнăхаймаççĕ. Вăйă умĕн кирпĕчсем час-часах алăран ӳкеççĕ. Анчах ĕçленĕçемĕн ачасем хăнăхаççĕ, вара кирпĕч те тикĕсĕн куçса пыраť.

## 10. ЙАЛАВ ÇӲРЕТНИ

Карта туса пукансем лартса тухмала. Пукансен хушши $^1/_2$ —$^3/_4$ метр. Ачасем пукансем çинче. Воспитатĕлницă пĕр ачана йалав параť, хăй вăйă мĕнле иртмелине ăнлантараť. Ача йалава сылтăм аллипе илет те, сылтăм йенчи кӳршине параť. Лешĕ йалава сулахай аллипе илет те, сылтăм аллине куçарса кӳршине параť. Çапла вара картара йалав çаврăнса çӳрет.

Йалава пит васкаса та, тата пит йерипен те çӳретмеле мар. Кам аллинчен йалав ӳкет, вăл ача вара алра йалав тытса пукансен хыçĕнчен карта тавра пĕрре çаврăнаť, кайран каллех хăйĕн вырăнне пырса лараť.

Вăйă çав йĕркепех иртет.

# ОКŤАБРЙАТСЕН ВАЙЙИСЕМ

## 11. ВĔСЕМ ĂÇТА ПУРĂНАÇÇĔ

10 çулхи тата аслăрах ачасем выљамала.
Выљакансен шучĕ—10—30 ача.
Вăйă вырăнĕ—площчадкă, килкарти, тăкăрлăк.

Пур ачасене те пĕр пек икĕ ушкăна уйăрмала. Икĕ ушкăн (вĕсем шеренгăпа хире-хирĕç тăрасçĕ), хушшинче 60 см. диаметрлă виçĕ çаврака тумала (1-мĕш ӳк.). Пĕр çавраки ăшĕнче „тинĕс“ тесе çырнă, иккĕмĕшĕнче — „вăрман“, виççĕмĕшĕнче — „шурлăх“.

Вăйă пуçланать, вожатăй ачасем йеннеле пăхса:

— Ачасем, калăр, тинĕсре мĕн пурăнать?

— Пулăсем.

— Мĕнле пулăсем?

— Çăрттан, çеђодкă, делфин, акулă, кит т. ыт. те.

— Вăрманта мĕн пурăнать?

— Упа, куйан, тилĕ, кашкăр. Кайăксенчен: шăпчăк, куккук, кăсийа, тăхран...

— Шурлăхра мĕн пурăнать?

— Шапа, аист, кайăк кăвакалсем...

— Халĕ ĕнтĕ, вăйă пуçланать. Епĕ пĕр-пĕр хисеп, калăпăр 2, тата „тилĕ“, тейĕп. Вара иккĕмĕш номĕрсен (икĕ шеренгинчен те) тилĕ пурăнакан вырăна — вăрмана чупмала. „Вăрмана“ кам маларах чупса çитет, çавăн ушкăнĕ очко илет.

— Епĕ „пиллĕк“, тейĕп. Вара çеђодкăн ăçта чупмала? Паллах, „тинĕсе.“

— Ну, пуçларăмăр: 6-ĕш, „куккук!“ (Ачасем чупаççĕ). Лайăх, çапла. Пĕрремĕш ушкăна пĕр очко. А есĕ иккĕмĕш ушкăнран ăçта чупрăн? Куккук шурлăхра пурăнать-и? Иккĕмĕш шеренгăна штраф — пĕр очко каталать.

Пур номĕрсем те чупса пĕтсен, вожатăй хăш ушкăн миçе очко илнине каласа парать.

Вӑйӑн пахалӑхӗ: лайӑх итлеме, вӑхӑтра тавҫӑрса илме, хӑвӑрт чупма хӑнӑхтарать.

## 12. ТРАКТӐРСЕН КОЛОННИ

**Выљђакансен шучӗ** —16—48 ача.

**Выљђамали вырӑн:** йе площчадкӑ йе пысӑк пӳлӗм.




1-мӗш ӳкерчӗк.

**Вӑйӑ ҫапла иртет:** Ачасене тӑватӑ ушкӑна (шеренгӑпа) уйӑрмала. 2-мӗш ӳкерчӗк ҫинче кӑтартнӑ пек параллелле тӑмала. Кашни шеренгӑна мӑшӑрласа (трактӑрпа трактӑрис) уйӑрмала. Трактӑрисӗсем аллисене умӗнчи ача хулпуҫҫийӗ ҫине хураҫҫӗ—ку гаражра трактӑр колоннисем трактӑрисӗсемпе тӑнине пӗлтерет. Кашни мӑшӑр кампа тата колоннӑра камхыҫҫӑн тӑнине асра тытмала. Вожатӑй сигнал парать—трактӑриссем трактӑрӗсене ӗҫе кайма йусаҫҫӗ („пепе-пе!“) гудок параҫҫӗ („у-у-у-у!“), вара ӗҫе

кайма тапранаççĕ (пур йеннеле те трактăрсем иртеççĕ). Иккĕмĕш çигнал пулсан, трактăрсемпе трактăриссем икшерĕн-икшерĕнех хăйсен вырăнне чупса килсе тăмала пулаŤ. Малтан килсе çитекен колоннă выљаса илет. Вăйă çĕнĕрен пуçланаŤ. Вăйă пахалăхĕ: хăвăрт чупма тата лайăх итлеме вĕрентет.

### 13. „ПАХЧА ТУСĔСЕМ"

**Выљакансен шучĕ**—15—30 ача.

**Выљамали вырăн**—площчадкă, пысăк пӳлĕм.

**Вăййа çапла хатĕрленмеле:** Выљамали вырăн ӳкерчĕк çинче кăтартнă пек (3-мĕш ӳк.) пулмала. Пахча йăранĕ, йăрантан 6—8 утăмра çаврашка — хурчăка çурчĕ. Пахчаран шалала виçĕ утăмран татах йĕр—кунтан кайăксен йăвисем пуçланаççĕ. Пахчана талккишпех хурт-кăпшанкă сапаланă (шăрпăк йе урăх йапала 80 кайа мар кирлĕ).

**Вăйă çапла иртет:** Выљакан октăбрйатсене кашни çаврашка çине 4—5 ача уйăрмала.



2-мĕш ӳкерчĕк.

Кашни çаврашкинчи ачасем—пĕр йăвари кайăксем пулаççĕ. Кайăксем йăвара (çаврашка ăшĕнче). Пĕр октябрйонăк хурчăка пулать. Хурчăка пахчана—хăйĕн çуртне кайать.



3-мĕш ўкерчĕк.

Вăйă пуçланать. Пахча çинче хурчăка вĕççе çўрет (аллисемпе хăлаçланса октябрйонăк хурчăка пек иртет). Кайăксем унтан хăраççĕ, вĕсем хурчăка хăйĕн йăвине вĕççе кайасса кĕтсе тăраççĕ. Хурчăка пахча çинче вĕççе çўресен-çўресен хăйĕн йăвине кайать. Çав вăхăтра кайăксем пахчана тухса хурт-кăпшанкă (шăрпăксене) пухма пуçлаç-

çĕ, вĕсем хыпаланса умайарах пухма васкаççĕ. Вожатăйăн труках: „Хурчăка“—тенĕ сасси илтĕнет. Кайăксем хăйсен йăвине васкаççĕ, хурчăка кайăксене хăвалать, хăшне-пĕрне тытать. Лекнĕ кайăксем хурчăка çуртне кайаççĕ, малала хăйсем кайăксене тытма хурчăкана пулăшаççĕ.

Хăш йăва пуринчен нумай хурт-кăпшанкă пухать, çав йăва вăйăра мала тухать. Хурт-кăпшанкăсене пухса илмеле, сатра сапаламала, вара вăйă çĕнĕрен пуçланать.

**Вăйă йĕрки**: 1. Вожатăй:—„Хурчăка!“—тесен кайăксен хăйсен йăвисене вĕçмеле. 2. Хурчăка кайăксене тытсан, хурчăка аллинчен вĕçерĕнсе тарма йурамасть. 3. Вожатăй:—„Хурчăка!“—тесен кăна, хурчăка кайăксене тытма пуçлать.

**Вăйă пахалăхĕ**: ачасем чупма, командăна итлеме, командăпа йĕркелĕ чупма вĕренеççĕ; мышцăсем хăнăхаççĕ; ачасен пĕлĕвĕ нумайланать.

## 14. „ЧУКУНÇУЛ“

**Выљакансен шучĕ**—15—45 ача.

**Выљамали вырăн**—килкартинчи плошчадкă йе анлă пӳлĕм.

**Вăйă çапла иртет**: Ачасенчен—„камăн кондуктăр пулас килет“—тесе ыйтăр. Кондуктăр пулас текенсенчен 5—6 ача суйлăр, вĕсен хулĕсене хĕрлĕ çитцă çыхмала. Ыттисене ĕретпе пĕр-пĕрин хыççăн тăратăр. Ачасем пĕр-пĕрин чавсисенчен тытаççĕ, вăл—пойăс. Малта тăракан ача—пăравус, ыттисем—вакунсем. Кондуктăрсем пойăс айккипе вакунсенçумĕпе пыраççĕ. Кондуктăрсем свисток па-

раççĕ—пойăс тапранать („тр-р-р-р“). Пăравус кăшкăртать („у-у-у-у“), кайран вакунсемпе пĕрле пăс пухать („ч-ч-ч ч-ч“), вара йе йерипен, йе вăхăт-вăхăтпа васкаса иртет; вăхăтлăха чарăнса тăрать те тата васкать, авкаланса иртет. Кондуктăрĕсем пойăс иртнĕ май айккипе пыраççĕ.

Пăравус иккĕ-виççĕ çаврăнсан, вожатăй: „çитрĕмĕр“,—тет те вара вакунсем (пăравусĕ те) пур йеннеле те саланса кайаççĕ, кондуктăрĕсем вĕсене тытса пухаççĕ те пĕр çĕре ĕретпе тăратаççĕ. Чи кайран тытнисенчен çĕнĕ кондуктăрсем суйлаççĕ—вăйă çĕнĕрен пуçланать.

**Вăйă йĕрки**: 1. Кондуктăр аллине лексен вĕçерĕнсе тарма йурамаст. 2. Кондуктăрсем вакунсене ĕрете тăратсан, ачасен вырăнтан тухмала мар.

## 15. ПАЛАТКĂСЕМ

**Выљакансен шучĕ**—15—45 ача.

**Вăйă вырăнĕ**: площадкă йе пысăк пӳлĕм.

**Кирлĕ хатĕрсем**. Кашни пилĕк ача пуçне пĕчĕк йалавсем хатĕрлесе хумала. Параппан пулсан аван.

**Вăйă çапла иртет**: Ачасене ушкăнăн-ушкăнăн 4—5-шер ачан уйăрăр. Кашни октябрйонăк хăйĕн ушкăнĕнчи ачасене асра тытмала. Кашни ушкăнра пĕр ачана йалав тыттарăр. Параппан çапаканĕ параппанне хăварт çапать, вăл вăхăтра ачасем пур йеннеле те хаваслăн сиккелеме тытăнаççĕ. Кăшт тăрсан параппан çапаканĕ виçĕ хут йерипен хытă (икĕ патаккипе тытса) шатлаттарать.

Çав вăхăтра ачасем хăйсен ушкăнĕнчи йулташĕсене тупса палаткă тăваççĕ (ушкăнри ачасем пурте йалава сылтăм аллипе тытса алăсене çӳле çĕклеççĕ, сулахай аллисем çĕреле пулаççĕ (4-мĕш ӳк.). Малтан йĕркеленнĕ палаткă ушкăнĕ выљаса илет.

**Вăйă йĕрки**: Параппана хăвăрт çапнă чухне ачасен сапалнса чупмала.

**Вăйă пахалăхĕ**: йулташа хăвăртах тупма вĕрентет, ритмă сисĕмĕ çирĕпленет.



4-мĕш ӳкерчĕк.

## 16. „ПУРТЕ ПĔР ÇЫН ПЕК"

**Выљакансен шучĕ**—20—50 ача.

**Выљамали вырăн**—площадкă, анлă пӳлĕм.

**Хатĕрленӳ**. Урайне пурпа йе площадкăра патакпа чĕртерсе икĕ йĕр тумала (хушши 10—15 утăм).

**Вăйă çапла иртет**: Ачасене ушкăнăн-ушкăнăн 8—10 ача уйăрмала. Выљакан ачасем пĕр-пĕрин хыçĕнчен—аллисемпе хулпуççи çинчен тытса тăраççĕ. Ушкăнсем пĕр-пĕринчен пĕр пек çывăхра йĕр умĕнче тăраççĕ (5-мĕш ӳк.).

„Хатĕрленĕр, итлĕр... Марш!" тенĕ командă пулаť. „Марш" сăмах хыççăн ачасен (алăсене хулпуççи çинчен илмеле мар) хирĕç выртакан йĕр патне чупмала. Иккĕмĕш йĕр патне чи малтан чупса çитнĕ ушкăн вăййа выљаса илет, мала

тухаҭ. Тăватă-пилĕк хут выљанă хыççăн мала тухнă ушкăн çинчен вожатăй пĕлтерет.

### 17. „ЙĔР ХЫÇÇĂН“

Выљакансен шучĕ—6—15 ача.
Вăййă вырăнĕ—вăрман, вĕтлĕх.


5-мĕш ӳкерчĕк.

Вăййă çапла иртет: Пĕр октябрйонăк пытанаканĕ пулаҭ. Ку октябрйонăк пуринчен малтан кайса çухалаҭ. Анчах вăл хăш йеннеле кайнине пĕлтерме хăй хыççăн йĕр хăвармала. Вăл хăй иртнĕ çул çине хут татăкĕсем пăрахса хăвараҭ. Анчах шыракансем ан тупайччăр тесе, вăл хăйĕн çулне пĕлтересшĕн мар пулаҭ. Выљакансенчен 10—15 утăм кайсан тин хут татăкĕсене пăрахма пуçлаҭ.

3—5 минут иртсен ытти выљакансем тухаççĕ. Унăн йĕрне йĕрлесе çул çинчи хутсене пухса пыраççĕ. 15—20 минут шыраса çӳреççĕ; çав вăхăтра „çухалнă“ ачана тупаймасан, шыракансем: „Йĕр çухалнă, йĕр çухалнă“—тесе çигнал параççĕ те, шырама чарăнаççĕ.

Вара тата ҫĕнĕрен тепĕр октябрйонăка суйлаççĕ—вăл пытанаканĕ пулаť.

**Вăйă пахалăхĕ**: шырама вĕренет, сисĕмлĕх ӳсет.

## 18. „ТИЛĔ ЧĂХ ЙĂВИНЧЕ"

**Выљакансен шучĕ**—12—30 ача.

**Выљамали вырăн**—пысăк пӳлĕм йе плошчадкă.

**Хатĕрленӳ**. Плошчадкăн тăвата йенне те тенкелсем лартмала, вĕсем чăхсем ларакан вырăнсем пулаççĕ. Тенкелсенчен 5–6 утăмра пĕр йенне ҫаврака йĕр тăвăр—вăл тилĕ шăтăкĕ пулаť.

**Вăйă ҫапла иртет**: Ачасенчен пĕри—тилĕ, тепри—автан, ыттисем чăхсем пулаççĕ.

Вăйă пуçланаť. Тенкелсем хушшинче чăхсем ҫӳреççĕ, апат шыраççĕ, ҫуначĕсемпе ҫатлаттараççĕ. Вожатăй сигнал панă тăрăх автанĕ икĕ хутчен „ку-ку-ре-е-ку-у!" тет. Автан икĕ хут авăтнă хыççăн чăххисем пур йеннеле те чупаççĕ, тилĕрен хăтăлас тесе кашта ҫине (тенкел ҫине) хăпараççĕ. Автан икĕ хут авăтнă хыççăн тилĕ чăх йăвине кĕрсе, кашта ҫине ларса ĕлкĕреймен чăхсене тытса хăйĕн шăтăкне илсе кайаť.

Тилĕ виç-тăвата чăхха тытсан, вăйă пĕтнĕ шутланаť. Тилĕ аллине лекнĕ чăхсенчен ҫĕнĕ тилĕ суйлаççĕ.

## 19. „КАРТАРИ МЕЧĔК"

**Выљакансен шучĕ**—15—30 ача.

**Вăйă вырăнĕ**—плошчадкă йе пысăк пӳлĕм.

**Вăййă çапла иртет**: Йĕри-тавра карталанса тăраççĕ. Пĕри мечĕк çӳретекен пулаť, вăл карта варринче тăраť.

Вăййă пуçланаť. Мечĕке картара пĕр-пĕрне хăвăрт параççĕ: йе пĕр йенне, йе тепĕр йенне йараççĕ (мечĕке йунашар тăракан ачана çеç пама йураť). Çӳретекен мечĕке илесшĕн. Кам аллинчен мечĕке илет, çав мечĕк çӳретекенĕ пулаť, лешĕ вара унăн вырăнне тăраť.

Мечĕке ăнсăртран çĕре ӳкерсен, вăл çӳретекен вырăнне тухаť.

### 20. „БАШҌĂНА ТЫТСА ИЛНИ"

**ВыҌакансен шучĕ**—20—30 ача.

**Хатĕрленӳ**. Кашни ушкăна 3—4 кĕреçе тупса парсан аван пулаť.

**Вăййă çапла иртет**: Ачасене икĕ пĕр пек ушкăна уйăрмала. Командă панă хыççăн ачасем йуртан башҌă купалама тытăнаççĕ (кашни ушкăн хăй уйрăм башҌă купалаť), башҌăсен хушши пĕр-пĕринчен 8—10 утăм пулаť. Кашни ушкăн хăйĕн башнине çӳлерех те çирĕпрех тăвасшăн тăрăшаť. Иккĕмĕш çигнал хыççăн башҌăна купалама чарăнаççĕ те, кашни ушкăн паллă тунă тĕле ĕретпе тăшманăн йур купине хирĕç 6—8 утăмра тăраť. „Хатĕрленĕр!"—тенĕ командă хыççăн ачасем йур чăмаккисем тума васкаççĕ. Хатĕрленӳ пĕтсен тăшманăн йур купине йур чăмаккипе пеме тытăнаççĕ, хăшĕн те пулин йур купи ишĕличченех переççĕ (6-мĕш ӳк.). Йур купине малтан персе ишекен ушкăн выҌаса илет.

**Вăйă йĕрки:** 1) Вăйăна çигнал умĕн йе кайа йулса пуçлама йурамаст. 2) Йур чăмаккисене ывăтнă чухне йĕр урлă каçса (6—8 утăмран кайарах) пеме йурамаст.



6-мĕш ӳкерчĕк.

## 21. „Т У П“

**Выљакансен шучĕ**—5—15 ача.

**Вăйă вырăнĕ**—пĕчĕк пӳлĕм.

**Вăйă çапла иртет**: Вожатăй ачасене пĕр-пĕр йапала, калăпăр, кăрандаш кăтартат. Вара ачасене пӳртрен тухма хушат. Ачасем тухсан кăрандаша питĕ сахал курăнмала çĕре пытарат. Ачасем кĕреççĕ те пур çĕре те шырама тытăнаççĕ. Кăрандаша тупакан ыттисене каламасăр вожатăйа çеç шăппăн кайса калат. Çапла ыттисем те кăрандаша тупсан, вожадăйне хăлхаран çеç калаççĕ. Ачасем пурте пырса каласан, вожатăй: пĕрремĕш, иккĕмĕш, виççĕмĕш, тупнă ачасем мала тухнă,—тесе пĕлтерет. Вăйă çĕнĕрен пуçланат.

## 22. „МĔН УЛШĂННĂ КУНТА“

**Выљакансен шучĕ**—5—10 ача.

**Вырăн**: пĕчĕк пӳлĕм.

**Вăйă çапла иртет**: Сĕтел çине 6—8 тĕрлĕрен йапала хурăр. Выљакан ачасенчен пĕри 1—2 минут хушши пăхса, миçе йапала пулнине, вĕсене мĕнле йĕркепе хунине асăрхать. Унтан вăл тула тухать, çак вăхăтра пӳртре лараксн октябрйатсем йапаласен йĕркине урăхлатаççĕ, икĕ йапалине илсе урăх çĕре хума та йурать. Тула тухнă ачана чĕнсе кĕреççĕ те çапла ыйтаççĕ: „мĕн улшăннă, мĕнле йапала çитмест?“ т. ыт. те. Тĕрĕс калакан ача выљаса илет. Вара ку йапаласене веçех улăштармала, çĕнĕ йапаласем тупса вĕсене тата çĕнĕ йĕркепе хумала.

Тула тухаканни тепĕр октябрйонăк пулать, вăйă малала тăсăлать.

## 23. „К У Ч Ч Е Н Е Ç“

**Выљакансен шучĕ**—10—30 ача.

**Вăйă вырăнĕ**—пĕчĕк пӳлĕм те йурать.

**Вăйă çапла иртет**: Ачасене икĕ ушкăна уйăрмала: пĕри—хулари пионерсем, тепĕр ушкăнĕ—колхоз пионерĕсем. Пĕр ушкăнĕ, калăпăр, колхозри пионерсем, пӳртрен тухаççĕ те тулта хулари пионерсем вაљљи мĕнле кучченеç илсе кайасси çинчен канашлаççĕ, анчах ун çинчен пĕлтермеççĕ. Хула пионерĕсем пӳртре колхозри пионерсем ваљљи мĕнле кучченеç хатĕрлесси çинчен канашласа хураççĕ.

Акă икĕ ушкăнĕ те хатĕр. Алăк уçăлать, пойăс чашкăрса килни илтĕнет, гудок илтĕнет—колхоз

пионерӗсем (пӗр-пӗрин хулӗнчен тытса, урисемпе тапӑртаттарса) пойӑспа килеççӗ. Пӑравус кӑшкӑртать те, пойӑс чарӑнать. Колхозри пионерсем хула пионерӗсене хирӗç ӗретпе (шеренгӑпа) тӑрса: „Аван-и, пионерсем!“ теççӗ, лешсем: „Аван-ха!“ теççӗ.—„Епӗр сире ваљљи кучченеç кӳтӗмӗр,“—теççӗ колхозран килнӗ пионерсем.—„Мӗнле кучченеççем, кӑтартӑр-ха?“—тесе ыйтаççӗ хуларисем. Вара колхозран килнӗ пионерсем кучченеççене алӑпа фигурӑсем туса кӑтартаççӗ (калӑпӑр трактӑр, улма, çава илсе килсен çавсем пек фигурӑсем туса кӑтартмала).

Кайран хула пионерӗсем: „Епӗр те сире ваљљи кучченеç хатӗрленӗччӗ“,—теççӗ те мӗн хатӗрленине аллисемпе кӑтартаççӗ, калӑпӑр, аероплан, автомашинӑ, мечӗк т. ыт. те).

Икӗ ушкӑнӗ те пӗр-пӗрин кучченеçӗсене пӗлнӗ хыççӑн, вожатӑй хӑш ушкӑн мала тухнине пӗлтерет. Кучченеçе лайӑх кӑтартнӑ тата мӗнле кучченеç хатӗрленине (илсе килнине) тӗрӗс пӗлнӗ ушкӑн выљаса илет.

Ку вӑйӑ ачасен фантазине, шухӑшне ӳсме ирӗк парать.

## 24. „ÇӖР, ШЫВ, СЫВЛӐШ, КӐВАР“

**Выљакансен шучӗ**—10—30 ача.

**Вӑйӑ вырӑнӗ**—пысӑках мар пӳлӗм.

**Вӑйӑ çапла иртет**: Октябрятсем карталанса тӑраççӗ. Варринче—çӳретекен пулать. Çӳретекен: „çӗр!“—тесен, ачасен лармала; „шыв!“ тесен—

икӗ хутчен алӑпа ҫупмала; „сывлӑш!“ тесен—тӑрса алӑсене ҫӳлеле ҫӗклемеле; „кӑвар!“—тесен хӑйӗн тавра виҫҫӗ ҫаврӑнмала. Вӑйӑ пуҫланать. Ҫӳретекен карта варринче утса ҫӳрет те, пӗрин патне пырса: „ҫӗр!“, „шыв!“, „сывлӑш!“, „кӑвар!“—тет. Калӑпӑр, пӗр ача умне пырса хӑвӑрт: „Ҫӗр! пӗрре иккӗ, виҫҫӗ, тӑваттӑ, пиллӗк!“ тет. Вӑл ҫак сӑмахсене каласа пӗтериччен ача тивӗҫлӗ упражненине туса ӗлкӗреймесессӗн (калӑпӑр, „ҫӗр!“ тенӗ хыҫҫӑн ларса ӗлкӗреймерӗ йе йӑнӑшса ҫавӑрӑнса илчӗ), вӑл ҫӳретекен пулать, ҫӳретекенӗ унӑн вырӑнне тӑрать.

## 25. „ЙАЛАВА ТУП“

**Выљакансен шучӗ**—5—10 ача.

**Вырӑн**—плошчадкӑ йе пысӑк пӳлӗм:

**Хатӗрленӳ**—пур выљакансем ваљљи те куҫа ҫыхмали тутӑр кирлӗ.

**Вӑйӑ ҫапла иртет**: Плошчадкӑн варринче выљакансенчен 5—8 утӑмра йалавлӑ туйа тӑрӑнтармала. Выљакансенне пуринне те куҫӗсене ҫыхмала. Вожатӑй тӗрлӗ командӑ: „сулахайа!“ „сылтӑма!“ т. ыт. те парать. Ик-виҫӗ командӑ хыҫҫӑн: „йалав патнеле—марш!“—тет. 6—7 утӑм тунӑ хыҫҫӑн: „чарӑнӑр!“—тет. Ачасем чарӑнса тутрисене салтаҫҫӗ те... кулса йараҫҫӗ, мӗншӗн тесен вӗсенчен нумайӑшӗ йалавран веҫех тепӗр йенне кайнӑ.

Ачасем вожатӑй сассипе йалав тӗлне ан чухлаччӑр тесе, вожатӑй командӑсене тӗрлӗ вырӑна куҫа-куҫа калать.

## 26. „ПИЛЛЁКЕ ÇИТИ ШУТ“

**Выљакансен шучĕ**—10—40 ача.

**Вăйă вырăнĕ**—пысăк мар пӳлĕм.

**Вăйă çапла иртет**: Ачасенчен: „есĕр пиллĕке çитиччен шутлама пĕлетĕр-и?“—тесе ыйтăр. Вĕсем пĕр харăсах „пĕлетпĕр“,—тейĕç.—„Йурать,—тетĕр есĕр,—тĕрĕслĕпĕр“. Ачасем сирĕн çине пăхаççĕ, есĕр вĕсене хăвăр пӳрнесене пĕрерĕн-пĕрерĕн черетпе кăтартатăр. Пĕр пӳрнене кăтартатăр, вĕсем: „пĕрре“,—теççĕ. Алла илетĕр те икĕ пӳрне кăтартатăр, вĕсем „иккĕ“,—теççĕ. Çаплах виççĕ, тăваттă, пиллĕк кăтартса пырăр. Ачасем йăнăшмаççĕ. „Питĕ лайăх, халĕ ĕнтĕ тепре тĕрĕслесе тухар“,—тетĕр есĕр. Васкаса пĕр пӳрне, икĕ, унтан тăвата пӳрне кăтартатăр. Ачасем: „виççĕ“,—теççĕ. Çапла виç-тăвата хутчен туса иртерĕр, ачасем хаваслансах кулĕç. Вăйă хăвăрт иртмеле, анчах ачасем миçе пӳрне кăтартнине курма ĕлкĕрччĕр.

## 27. „АЕРОПЛАНПА ВĔÇНИ“

**Выљакансен шучĕ**—5—10 ача.

**Вăйă вырăнĕ**—пысăк мар пӳлĕм.

**Хатĕрсем**: 25 *см* кайа мар сарлакăшлĕ хăма хатĕрлĕр. Икĕ вăйлă пысăкрах пионерсене чĕнĕр—вĕсем ачасене аеропланпа вĕçтереççĕ. Шакăрмак тупсан тата аван пулать.

**Вăйă çапла иртет**:—„Камăн аеропланпа вĕçес килет?“—тесе ыйтататăр есĕр. Ачасем пурте: „манăн“, манăн—теççĕ.—„Пирĕн аероплан урăхларах, ун çинче куçа хупса кăна вĕçме пулать“—тесе ăн-

лантаратăр есĕр. Вĕçес текен ача куçĕсене тутăрпа çыхăр та, тĕлĕнмеле аероплан пӳлĕмне илсе кĕрĕр. Ăна хăма çине лартăр та вара: „манăн аларан хытă тыт, мĕншĕн тесен аероплан питĕ çӳле вĕçсе улăхать, есĕ ӳкме те пултарăн“,—тейĕр. Пионерсем хăмана пĕр çĕклесе, пĕр çĕреле антарса йарăнтараççĕ. Аероплан пек пултăр тесе шакăрмакпа шалтăртаттарсан аван пулать. Октябрйонăк шухăшĕпе—ăна таçта çити, çӳле илсе улăхнă пек туйăнать, анчах хăми çур метртан та ытла çĕкленмест. Октябрйонăк сирĕн аларан хытă чăмăртать. Хăмана йерипен урайне хурăр та, сиксе анма хушăр. Октябрйонăк хăма çинчен сикме иккĕленет, хăрать. Тутăра салтсан, вăл кулма пуçлать. Ку октябрйонăк курса тăма пӳлĕмех йулать, пӳлĕме тата тепĕр ачана илсе кĕрсе вĕçтереççĕ, унтан виççĕмĕшне, тăваттăмĕшне... Вĕçсе аннă октябрйонăксем вĕçнине курса савăнса кулса тăраççĕ.

## 28. „ПĂРАВУС“

**Выљакансен хисепĕ**—10—30 ача.

**Вăйă вырăнĕ**—площчадкă, йе пысăк пӳлĕм.

**Вăйă çапла иртет**: Выљакансене икĕ пайа уйăрăр: пĕр ушкăнĕ—пăравуспа вакунсем, иккĕмĕш ушкăнĕ—ачасем.

Пăравус ушкăнĕ пĕр-пĕрин хыççăн тăрса тухать. Иккĕмĕш ушкăн айккинче тăрать.

Пăравус çигнал („у-у-у-у-у“) парать, пăс кăларать („чш-чш-чш-чш“), йерипен тапранать, унтан хăварт-

рах васкаса сӑмахсен ритмипе (сӑмахсене пойӑсри ачасем каласҫӗ) иртет:

Пӑравус, пӑравус—пых-пых-пых,
Вӑйӗ унӑн пин лаша чул—пырат̆ малала.
Пӑравус, пӑравус—тики-тики-чук,
Вакун хыҫҫӑн вакунсем—хӗрӗхрен ытла.

Ҫак сӑмахсем хыҫҫӑн ачасем пӑравус ҫывӑхне пыраҫҫӗ.

Пойӑс чарӑнат̆, ачасем пӗр вырӑнта урисемпе тапӑртаттарса сӑмах ритмипе:

— Пӑравус, пӑравус, мӗн илсе килтӗн?—тесе ыйтаҫҫӗ ачасем.

— Молотилкӑ, ачасем, тӗрлӗ машинсем,—тет пӑравус.

— Пӑравус, пӑравус, пире ваљљи мӗн?—тесе ыйтаҫҫӗ ачасем.

— Сире ваљљи кӗнеке, кӗнеке те кӑнахвит,—тет пӑравус.

Кун хыҫҫӑн пӑравус ушкӑнӗнчи ачасем тӗрлӗ кӑтартусемпе (алӑпа) мӗн илсе килни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ, ачасем вӗсен йачӗсене пӗлеҫҫӗ.

Кайран ушкӑнсем улшӑнаҫҫӗ те, вӑйӑ ҫӗнӗрен пуҫланат̆.

## 29. „КУЙАН“

**(Мускаври Краснопреснӗ районӗнчи 36-мӗш шкулти окт̆абрйонӑк Филей Берх шухӑшласа кӑларнӑ вӑйӑ).**

**Выљакансен шучӗ**—10—40 ача.

**Вӑйӑ вырӑнӗ**—площчадкӑ йе пысӑк пӳлӗм кӑна.

**Вӑйӑ ҫапла иртет**: Пур ачасем те карталанса тӑраҫҫӗ. Пӗрне—ҫӳретекенне—варрине тӑратаҫҫӗ.

Ачасем картапа ҫаврӑнса иргнӗ майӑн айалта кӑтартнӑ сӑмахсене каласа тата алӑсемпе хускатса йе кукленсе ларса пыраҫҫӗ (ҫӳретекен те ҫаплах тӑват):

| | |
|---|---|
| Куйан пынӑ, пынӑ, пынӑ<br>Купӑста ҫиме кӗрсе кайнӑ<br>Ҫисе тӑнӑ, тӑнӑ та,<br>Унтан тухса кайнӑ | Картапа пыраҫҫӗ.<br>Кукленсе купӑста ҫийеҫҫӗ.<br><br>Картапа пыраҫҫӗ. |
| Васкаса чупса вӑл кайрӗ,<br>Кишӗре тӗл пулчӗ.<br>Мӑшлата, мӑшлатах<br>Кишӗрне те ҫисе йачӗ. | Кукленсе ларса.<br>Кишӗр ҫийеҫҫӗ. |
| Таппи ҫине тӑчӗ те<br>Вара чӗвен сикрӗ.<br><br>Урине хуҫа-хуҫах<br>„Линка-линка“ ташларӗ | Сылтӑм ури ҫине чӗрне вӗҫҫӗн.<br>Унтан ура тупанӗ ҫине тӑраҫҫӗ.<br>Ачасем савӑнса, кукленсе ташлаҫҫӗ. |

### 30. „ЧЕЉУСКИНЦӐСЕМ“

**Выљакансен шучӗ**—25—50 ача.

**Вӑйӑ вырӑнӗ**—плошчадкӑ йе пысӑк пӳлӗм.

**Вӑйӑ ҫапла иртет**: Выљакансене виҫӗ ушкӑна уйӑрӑр—чељускинцӑсем, пӑрсем, љотчиксем. Ултӑ йе сакӑр ача—пӑрсем пулаҫҫӗ. Чељускинцӑсем хӑйсен хушшинчен Шмидтпа Кренкеља (радиста) суйлаҫҫӗ.

Вӑйӑ пуҫланат. Чељускинцӑсем карталанса (шеренгӑпа)—аллисемпе хӑлаҫланса—малала йарӑнса шӑваҫҫӗ; хӑйсем ҫапла калаҫҫӗ (йе йурлаҫҫӗ):

Çурçĕрти пăрсем, тусем пек,
Хупăрлаççĕ пур йенчен.
Вăйлăн, паттăрăн ишетпĕр
Ним те мар вĕсем пире.
Парăнмасăр, ишнĕçемĕн
Кĕнĕ пăрлă çурçĕре.
Хытă тăрар çирĕп пулар!
Хӳревçĕ пăхсам мала!

Çак йулашки сăмахсемпе пĕрлех чељускинцăсем çине пăрсем тăвăнса пырса хĕсме пуçлаççĕ. Шатăртатса, çурăлса, пĕр-пĕринчен тытса вĕсем чељускинцăсем çине ӳпĕнеççĕ. Шмидтăн команди илтĕнет: „Çирĕп тăрăр! Пăрсем çине анăр!“ Карапĕ саланаť. Чељускинцăсем пĕччен-пĕччен пĕри—пĕр вырăнта, тепри—тепĕр вырăнта тăраççĕ; вĕсен тавра пăрсем. Пăрсенчен 5—6 утăмра љотчиксем тăраççĕ.

Кренкел (радис) радио тăрăх пĕлтерет: „Алло, алло! Епĕр пăр çинче. Хăтарăр!“—тет. Пăрсем аллисене çĕклеççĕ. Вожатăйăн: „пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă, пиллĕк“,—тенĕ çигналĕ тăрăх ачасем аллисене çĕклеççĕ; „трум!“—тенĕ сигналпа аллисене çĕреле усаççĕ; вожатăй татах алăсене çĕклемели çигнал параť, унтан—„трум“—тет. Љотчиксем чељускинцăсене хăтарма васкаççĕ, хатĕрленеççĕ. Вĕсем чељускинцăсене çапла хăтараççĕ. Пăрсем аллисене çĕклесен (*пăрсем пĕр вырăнта тăнине, йухманнине пĕлтерет*) љотчиксем черетпе васкавлă карта ăшне чупса кĕреççĕ те, икĕ чељускинцăна аллисенчен тытса илсе тухаççĕ. Анчах љотчиксем тухса ĕлкĕриччен пăрсем аллисене çĕреле усма ĕлкĕрсен (*командă панă*

*хыççăн)*, вĕсем *(ђотчиксем)* алăсем тата çĕклениссине кĕтсе тăраççĕ, алăсем çĕкленсен чупса тухаççĕ. Чеђускинцăсене пурне те çапла хăтараççĕ. „Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă, пиллĕк!“— тесе командă панă вăхăтра карта ăшне кĕрсе чеђускинцăсене илсе тухакансем лайăх ђотчиксем пулаççĕ. Вара рођсене улăштараççĕ: пăр пулни—ђотчик пулаť, ђотчиксем — чеђускинцăсем пулаççĕ, чеђускинцăсем —пăр пулаççĕ. Пур ача та ђотчик пулса иртет.

# ПИОНЕРСЕН ВĂЙĂЙИСЕМ

### 31. „ÇАПЛА ТУ, КАПЛА ТУ“

10—16 çулхи ачасем вађђи.

**Выђакансен шучĕ**—звено йе отрйад.

**Вăйă вырăнĕ**—отрйад йе звено пухăвĕ иртекен пӳлĕм.

**Вăйă çапла иртет**: Выђакансем карталанса тăраççĕ, варринче—çӳретекен. Çӳретекен „çапла ту“ тесе алăпа, урапа, пĕвĕпе, пуçне хускатса тĕрлĕ фигурăсем тăваť. Ун хыççăн çӳретекен тунă пекех выђакансем те тума тивĕçлĕ. Çӳретекен „капла ту“ тесен, выђакансен нимĕн те тумала мар. Йăнăшакан („капла ту“, тенĕ хыççăн та çӳретекен пек фигурăсем тăвакан) вăйăран тухаť. Пĕрре те йăнăшман ача иккĕмĕш вăйăра çӳретекен вырăнне тăраť.

### 32. „ХĂВĂРТРАХ ШУХĂШЛА“

10—16 çулхи ачасем вађђи.

**Выђакансен шучĕ**—звено.

**Вӑйӑ вырӑнӗ**—звено пухӑнакан пӳлӗм.

**Кирлӗ хатӗр**—мечӗк, тутӑр т. ыт. те.

**Вӑйӑ ҫапла иртет**: Ачасем карталанса лараҫҫӗ. Ачасенчен пӗри теприн ҫине мечӗк ывӑтать, хӑй ҫак вӑхӑтрах **„кол“** (сӑмах татӑкӗ) калать, мечӗке тытакан сӑмахӑн вӗҫне каласа пӗтермеле (**хоз** т. ыт. те). Сӑмах вӗҫне тӗрӗс мар калакан („**от**“ йе чарӑнса тӑракан айӑпа кӗрет, вӑл вара тӗрӗс тупса каличчен ура ҫине тӑрать.

**1-мӗш вариант.** Сӑмах сыпӑкӗ вырӑнне саспаллисем каласан та йурать. Выљакансен вара ҫав саспаллипе пуҫланакан сӑмах тупмала.

**2-мӗш вариант.** Мечӗке ывӑтнӑ майӑн пӗр-пӗр сӑмах калать, мечӗке тытакан ҫак сӑмахӑн йулашки саспаллипе пуҫланакан сӑмах тупса каламала. Калӑпӑр, мечӗке ывӑтакан **„пионер“** сӑмах каларӗ, мечӗке тытакан **„радио“** (йе урӑх—**„р“**—па пуҫланакан сӑмах) каламала. Радио тесе ывӑтать те, теприи **„облигаци“** тет, малала та ҫаплах.

**3-мӗш вариант.** Мечӗке ывӑтакан пӗр-пӗр професси, калӑпӑр **„учитӗл“**,—тет, мечӗке тытаканӗ ҫак професҫин пӗр-пӗр йапалине (калӑпӑр, *кӗнеке, перо, кӑрандаш* т. ыт. те) каламала.

Пур вариантсенче те, тӗрӗс ответ париччен, айӑплин ура ҫинче тӑмала.

## 33. „ЙЕНЛӖКСЕМ, КАЙӐКСЕМ, ПУЛӐСЕМ“

10—13 ҫулхи ачасем ваљљи.

**Выљакансен шучӗ**—звено.

**Вӑйӑ вырӑнӗ**—звено пухӑнакан пӳлӗм.

**Кирлӗ хатӗр**—мечӗк.

**Вăййă çапла иртет**: Ачасенчен пĕри мечĕке ывăтаť те вăл вăхăтра: **„йенлĕксем, кайăксем, пулăсем“**, тет. Унтан çак виçĕ сăмахран пĕрне **„кайăксем“** сăмаха иккĕмĕш хут калаť те, пиллĕке çити шутлаť. Çак пиллĕке çити шутланă вăхăтра мечĕке тытакан пĕр-пĕр кайăк йатне каламала. Вăхăтра каласа ĕлкĕреймесен, ача тĕрĕс ответ париччен ура çинче тăраť.

## 34. „ЧĔЛХЕСĔРСЕМ“

10—13 çулхи ачасем ваљљи.

**Выљакансен шучĕ**—звено йе отрйад.

**Вăйă выранĕ** — звено йе отрйад пухăнакан пӳлĕм.

**Вăйă çапла иртет**: Ачасем карталанса тăраççĕ, вĕсенчен пĕри çӳретекен пулса йе пĕринчен йетепĕр ачаран ыйтаť, анчах вăл ача ответ памасť; ыйтнă ачаран сулахай йенче тăраканни ответлемеле. Вăхăтра йе вуçех ответ параймасан, вăл ача çӳретекен выранне тăмала.

## 35. ДОМИНО МОРЗЕ[1]

10 çулхисенчен аслăрах ачасем ваљљи.

**Выљакансен шучĕ—2—5 ача.**

Картонран 30×65 миллиметрлă тăваткăл касса тумала. Тăваткăлĕн пĕр йенне (питне) икĕ пĕр пек пайа уйăрмала. Сылтăм йенне Морзе азбукине, сулахай йенне—саспаллисем йе цифрсем çырмала (7-мĕш ӳк.).

**Вăйă çапла иртет**: Морзе азбукине пурне те (саспалисене, цифрсене, паллăсене) çакăн пек

[1] Ку вăйă Морзе азбукине вĕренме пулăшаť. Морзе азбукине пĕлмен ачасем те вăйа выљама пултараççĕ.

йёркепе (вёренме çăмăллисене пирвайхи таблицăна кёртсе, йăвăртараххине кайарах т. ыт. те) пилёк таблицă туса уйăрмала.



7-мёш ӳкерчёк.

### ПЁРРЕМЁШ ТАБЛИЦĂ

| | |
|---|---|
| Е . | Т — |
| И . . | М — — |
| С . . . | О — — — |
| Х . . . . | Ш — — — — |

### ИККЁМЁШ ТАБЛИЦĂ

| | |
|---|---|
| А . — | Н — . |
| У . . — | Д — . . |
| Ж . . . — | Б — . . . |

### ВИÇÇЁМЁШ ТАБЛИЦĂ

| | |
|---|---|
| В . — — | Г — — . |
| Й . — — — | Ч — — — . |
| З — — . . | Ю . . — — |

### ТĂВАТТĂМЁШ ТАБЛИЦĂ

| | |
|---|---|
| Л . — . . | Ф . . — . |
| Я . — . — | Ц — . — . |
| Щ — — . — | Ы — . — — |
| К — . — | Р . — . |
| П . — — . | Ь — . . — |

## ПИЛЛĔКМĔШ ТАБЛИЦĂ

1 ·— — — —
2 · ·— — —
3 · · ·— —
4 · · · · —
5 · · · · ·
6 — · · · ·
7 — — · · ·
8 — — — · ·
9 — — — — ·
10 — — — — —

Кашни таблицă валљи уйрăм картăчкă хатĕрлемеле. **Пĕрремĕш таблицă** валљи 64 картăчкă кирлĕ; вĕсем çине çапла çырмала:

Е ·
е · ·
е · · ·
е · · · ·
е —
е — —
е — — —
е — — — —
И ·
и · ·
и · · · малала та çаплах.

Пĕр сăмахпа каласан, пĕрремĕш таблицăн кашни саспалли йе цифри хăйĕн йĕркипе пĕрремĕш таблицăн пур паллисемпе те сыпăнса пымала. **Иккĕмĕш таблицă** та çаплах пулмала, анчах кунта 36 картăчкă кирлĕ.

А —
а · ·—
а · · ·—
а — ·
а — · ·
а — · · ·
У ·—
у · ·— малала та çаплах.

**Виççĕмĕш таблицăна** 36 картăчкă кирлĕ, тăваттăмĕшпе пиллĕкмĕшне 100-шер картăчкă кирлĕ.

Кашни таблицă тăрăх вăйă хăйне майлă уйрăмăн **иртет.**

Вăйă çапла пырать. Сăмахран, **вăйă пĕрремĕш** таблицă çинче пырать. Выљакансем 7-10-шар картăчкă илеççĕ, йулашки—кон. **Задачă—алăри картăчкăсенчен мĕнле те пулсан хăвăртрах хăтăлас пулать.**

Вăййа пуçлаканĕ сĕтел çине пĕр картăчкине, калăпăр, „е — — —", хурать. Иккĕмĕш ачи аллинчи картăчкăсенчен сылтăм йенчи йе сулахай йенчи таблицăри картăчкăна хумала. Сылтăм йенчен „0" саспалилĕ картăчкă пуласси паллах *(виçĕ тире „0" саспаллине пĕлтереççĕ)*; сулахай йенчен пăнчă паллăлă картăчкă пулать (*пĕр пăнчă кăна пулсан „е" саспаллине пĕлтерет*).

Унăн хумали картăчкă çук пулсан, вăл конран илет.

Вăйă пĕрин аллинчи картăчкăсем веçех пĕтиччен тăсăлать. Кам картăчкисене маларах пăрахса пĕтерет, вăл выљаса илнĕ шутланать.

Пĕрремĕш таблицăри паллăсене лайăх вĕренсе çитсен тин иккĕмĕш таблицăри картăчкăсемпе выљама пуçламала.

### 36. „ПĔР-ПĔРНЕ ПĔЛЕКЕНСЕМ ХИРĔÇ ПУЛНИ"

13—16 çулхи ачасем ваљљи.
**Выљакансен шучĕ**—отрйад.
**Вăйă вырăнĕ**—отрйад пухăнакан пӳлĕм.

**Вăйă çапла иртет**: Икĕ ача выљакан ачасене çапла калаççĕ: „епĕр сирĕн умра—сире паллă çынсем (калăпăр, пĕри—*шкул пуçлăхĕ*, тепри—*отрйад вожатăйĕ)* пулса калаçатпăр, сирĕн епĕр камне пĕлес пулаť“,—теççĕ.

Вĕсем калаçаççĕ. Ытти ачасем вĕсем мĕн çинчен тата мĕнле калаçнине (калăпăр, *шкул пуçлăхĕ* калаçнă чухне йаланах *аллисене выљатаť*—ача та çапла *аллисене выљатаť* т. ыт. те) кура, вăл кам пулнине пĕлмеле. Анчах, камне пĕлсен, ăна ытисене каламала мар, вĕсен ун çинчен вожатăйа хăлхаран пырса пĕлтермеле, вожатăй хут çине çыраť. Чи малтан тĕрĕс пĕлекенĕ выљаса илет.

## 37. „ВИÇĔ СĂМАХ“

10—13 çулхи ачасем валљи.

**Выљакансен шучĕ**—звено.

**Вăйă вырăнĕ**—звено пухăвĕ пулакан пӳлĕм.

**Вăйă çапла иртет**: Ачасем карталанса лараççĕ, варринче—çӳретекен. Çӳретекен йе пĕр ачана йе теприне пырса виçĕ сăмах калаť, лешĕ вăл сăмахсенчен пуплев тумала.

Пуплев тума 3—5 минут вăхăт памала.

## 38. „СĂВĂÇСЕМ“

13—16 çулхи ачасем валљи.

**Выљакансен шучĕ**—звено.

**Вăйă вырăнĕ**—звено йаланах пухăнакан пӳлĕм.

Кашни выљакана хут тата кăранташ кирлĕ.

**Вăйă çапла иртет**: Кашни ача хăйĕн сулахай йенчи кӳршине сăвăлама тăвату рифмăлă сăмах, калăпăр, **пит, çит, кăнтăр, мăнтăр** т. ыт. те па-

раҫ. Сăвă ҫырмашкăн (ҫулне кура) вăхăт параҫҫĕ. Вăхăт иртсен кашни хăйĕн сăввине вуласа параҫ. Ҫапла вара вăййă питех аван иртет.

## 39. „ПУРНЕ ТЕ ПĔЛЕКЕНСКЕР“

13—16 ҫулхи ачасем валлиⱡи.

**Выљакансен шучĕ**—темиҫен пулсан та йураҫ.

**Вăййă ҫапла иртет**: Выљакансем пĕрле тĕрлĕрен ыйту тупса лартаҫҫĕ, калăпăр, **общество-веденипе** (мĕнле те пулин *револђуционер* йатне т. ыт. те), **географипе** *(шыв, кўлĕ, хула, сăртсен йачĕсене)* т. ыт. те. Ҫакăн пек ыйтусем 10-ран ытла мар тупса хумала, ăна столбикпе ҫырсан аван (айаларах вула). Кун хыҫҫăн пĕр саспалли каламала.

**Задачă**: 1) ҫак ыйтусене хирĕҫ кĕске вăхăтрах ответ тупса памала; 2) кашни ответ пĕр саспаллинчен пуҫланмала. Ачасем пур ыйтăва та ответ тупса панă хыҫҫăн, вăййă пĕтет. Выљакансем пурте хăйсен ответне вулаҫҫĕ. Пур ыйтăва та тĕрĕс ответ пама пĕлнĕ ача выљаса илет.

Калапăр „М“ саспалли пĕлтернĕ.

| ЫЙТУСЕМ: | ОТВЕТСЕМ: |
|---|---|
| 1. Револђуционер хушамачĕ | Маркс |
| 2. Производствăри ĕҫ хатĕрĕ | Мăлатук |
| 3. Пўлĕмри йапала йачĕ | Минтер |
| 4. Пĕр-пĕр ăслăлăх | Медицинă |
| 5. Писатĕлĕн хушамачĕ | Мамин—Сибирйак |
| 6. Чечек йачĕ | Мăкăњ |
| 7. Курăк йачĕ | Мăйан |
| 8. Физкулђтурă хатĕрĕ | Мечĕк |
| 9. Пĕр-пĕр колхоз йачĕ | Майак |

## 40. „КАМ ХĂВĂРТРАХ"

13—16 çулхи ачасем ваљљи.

**Выљакансен шучĕ**—отрйад.

**Вырăн**—йал йе хула тулашĕнчи екскурçи.

Йĕлтĕрпе каймала пулсан, йĕлтĕр хатĕрлемеле.

**Вăйă çапла иртет**: Йал тулашне тухсан, ачасене лайăх курăнакан тĕл (йăвăç, ту, савăт труби, çурт т. ыт. те) курăнакан йапалана мĕнле пулсан та хăвăртрах тĕллесе çитме сĕнмеле. Ачасем канашласа маршрут (каймали çул) йышăнаççĕ те, лайăх тата хăвăрт çитме май паракан тÿрĕ çул тупса тапранаççĕ. Вожатăй тĕп условине пĕлтерет: тĕлленĕ вырăна чи йулашки ача çитсен кăна çитнĕ шутланаççĕ, çавăнпа та звенори ачасем пурте пĕрле тапранаççĕ, йулакансене пулăшаççĕ.

Хĕл кунĕнче выљаççĕ пулсан, вожатăйăн йĕлтĕрпе лайăх çÿреме пĕлмеле, мĕншĕн тесен вăл вăхăтра çитсе килекен звеносене çырса тăмала. Вăйă выљамали вырăн сăртлăхра йе çырма-çатралă вырăнта пулсан аван, тĕлленĕ çĕре кайма çул кирлĕ мар, ун пек чухне тепĕр тĕл тупмала.

## 41. „КИТАЙЛА ПУÇÇАВĂРМĂШ"

10—16 çулхи ачасем **ваљљи.**

**Выљакансен шучĕ** пĕр ачаран пуçласа звено хисепне çити кирлĕ.

**Кирлĕ хатĕрсем**—хулăм картон, ăна 8-мĕш ÿкерчĕкре кăтартнă пек касмала.

**Вăйă çапла иртет**: Каснă татăксенчен тĕрлĕ тĕслĕ фигурăсем тума йурать. Анчах çакна пĕлмеле:

кашни фигурӑна пур ҫичӗ татӑкӗ те вырнаҫмалӑ, татӑксен хушшисенче нимӗнле шӑтӑк таврашӗ те йулмала мар, картон ҫине картон хума та йурамасть.



8-мӗш ӳкерчӗк.

Фигурӑсене тума йӑвӑр та мар, анчах задачӑна тума йӑвӑртарах вара. Тӑваткӑл, виҫкӗтес т. ыт. фигурӑсене йӗркелеме тытӑнсан та, питех нумай шухӑшласа лармала пулать (9—10-мӗш ӳк.).

Тунӑ фигурӑсене хуратмала, ытти ачасене ҫӗнӗрен тума хушмала. Фигурӑсене тӑтӑшах хуратмала.

Выљакансем нумайӑн пулсан, вӗсем хушшинче ӑмӑрту уҫма йурать (сӑмахран 5—10 минут хушши). Пӑхса тума йурамасть.

## „42. САСПАЛЛИСЕНЧЕН ТУНӐ ШАРАДӐ“

10—16 çулхи ачасем валҙи.
**Выҙакансен шучӗ**—звено йе отрйад.
**Вӑйӑ вырӑнӗ**—пионерсем пухӑнакан пӳлӗм.



9-мӗш ӳкерчӗк.

**Вӑйӑ çапла иртет**: Ачасене икӗ пайа уйӑрмала. Пӗр ушкӑнӗ йунашар пӳлӗме кӗрет, тепӗр ушкӑнӗ йулаҭ. Ик ушкӑнӗ те канашласа сӑмах тупаççӗ, сӑмахри кашни саспаллине мӗнле кӑтартасси çинчен сӳтсе-йаваççӗ. Калӑпӑр „**перо**“ сӑмах йышӑннӑ. Вӑл сӑмаха ачасем çапла выҙаса (каласа та) кӑтартаççӗ:

1. „П“ саспалли—**парад**. Ачасем парада васкаççĕ, вĕсем парадра мĕнле утса пынине, мĕнле тăнине кăтартаççĕ.

2. „Е“ саспалли—**ертел**. Ачасем ертелĕн ĕçне, хăватне кăтартаççĕ, ертел пĕрле ĕçленине кăтартаççĕ.



10-мĕш ўкерчĕк.

3. „Р“ саспалли—**радио**. Ĕç майак çинче пулса иртет. Радис телеграммă илет, çав вăхăтра труках „SOS“ сас илтĕнет. Радис хыпаланса çывăхри порта пăрахут путни çинчен пĕлтерет. Кăшт тăрсан—„хăтарма командă йанă“,—тесе ответ килет. Майакра ĕçлекен çынсем хăраса: „пăрахута

хăтарма пултарĕç-ши?"—тесе лараççĕ. Çав вăхăтрах—„Пăрахут çинчи çынсене хăтарнă",—тесе телеграммă килет. Майак çинче ĕçлекенсем савăнаççĕ. Радио усси питĕ те пысăк теççĕ вĕсем.

4. „0" саспалли—**облигаци.** Облигаци йалхуçалăхне, транспăрта, промышлĕннăçа вăйлатма кайни çинчен калаçаççĕ, кăтартаççĕ.

Иккĕмĕш ушкăн та хăйсем канашласа йышăннă сăмахне кăтартат.

Ик ушкăнĕ те хатĕрленсе çитсен, вĕсем пĕрле пухăнаççĕ. Пĕрремĕш ушкăнĕ кăтартат. Иккĕмĕш ушкăн канашласа вĕсем мĕнле сăмах шутласа кăтартнине калат. Виçĕ сăмах каласан та пĕлмесен (шухăшлама 5—8 минут хушши вăхăт параççĕ), иккĕмĕш ушкăн пĕлмен шутланат. Тĕрĕс тата кĕске вăхăтрах пĕлнĕ ушкăн вăйăра выљаса илнĕ шутланат.

Правилăсем:

1. Ушкăнпа канашламасăр ответа калама йурамаст;

2. Сăмахри саспаллисене ăнлантарас майсемпе калаçма, йуптарма сăвă калама йурат.

Вăйăра отрйад пĕтĕмĕшпех выљат пулсан, кашни звено мĕнле сăмах каланине пĕлме тăрăшат.

Кĕске, 4—5 саспаллилĕ сăмахсем илсен аван, мĕншĕн тесен нумай саспалилĕ сăмахпа вăйă вăраха тăсăлат, ывăнтарат.

## 43. „КИНО"

10—13 çулхи ачасем валљи.

**Вăйăра выљакансен шучĕ**—отрйад.

**Выљамали вырăн**—отрйад пухăнакан пўлĕм. Сценă йе естрадă пулсан тата та аван.

**Вăйă çапла иртет**: Пурнăçран пĕр-пĕр пулса иртнĕ йапала йе пĕр-пĕр истори шухăшласа тупаççĕ те, çавна пĕр сăмахсăр кăна, мимикăпа, алăсемпе выљатса кăтартса параççĕ. Вăхăт-вăхăтпа кино мĕн çинчен пынине выљакансенчен пĕри ăнлантара-ăнлантара парать. Ачасен çулне кура, тĕрлĕ йапала çинчен кино кăтартма йурать. Камитле, кулăшла выљани ачасен кăмăлне кайать.

Ку вăйă ачасен фантазине, изобретатĕлствине ўсме пулăшать. Вăйă лайăх irттĕр тесен, малтан мĕн çинчен выљассине (содержанийе) лайăх, вирлĕн каласа пани кирлĕ.

„Сеанс" пĕтсен, ачасем кино-картинă çинчен каласа пама тивĕçлĕ. Тĕрĕс тата илемлĕ каласа параканне премилемеле.

## 44. „Б У М"

10—16 çулхи ачасем валљи.

**Выљакансен шучĕ**—звено.

**Вăйă вырăнĕ**—пионерсем пухăнакан пўлĕм.

**Вăйă çапла иртет**: Выљакансем карталанса тăраççĕ йе лараççĕ; варринче—вожатăй. Вăл ачасене шутлама хушать. Анчах шутлакансем 7 тĕлне йе çичче уйăрăлакан урăх цифрă (14, 21, 28, т. ыт. те) тĕлне çитсен выљакан „бум" теме тивĕçлĕ *(вăл цифăрсене калас вырăнне „бум" каламала)*. Йăнăшакан *(„бум" вырăнне цифрине калакан)* картаран тухать. Вăйă пур ача та картаран тухса пĕтиччен пырать.

Ку вӑйӑа урӑх цифрӑсемпе те (калӑпӑр, 3, 5, 8, т. ыт. те) иртерме йурат̆.

## „45. ЕСЁР ӐҪТА ҪУРАЛНӐ“

10—16 ҫулхи ачасем валђи.

**Выљакансен шучё**—звено йе отрйад.

**Вӑйӑ вырӑнӗ**—пӳлём, клас.

**Вӑйӑ ҫапла иртет**: Выљакансенчен пёри пӳлём-рен тухат̆, ыттисем пёр-пёр республикӑ, край йе облӑҫ ҫинчен шухӑшласа хатёрлесе хураҫҫӗ.

Выљакан тултан кёрсе ларакансенчен ҫапла ыйтат̆: „Есёр ӑҫта ҫуралнӑ?“—тет. Выљакансем сӑмахпа калас вырӑнне пёр ачи вёсем ҫуралнӑ ҫёршывне—республикне, крайне, облӑҫне ӑнлан-тарса парат̆. Калӑпӑр, Анат Атӑл крайёнче ҫуралнӑ пулсан, вӑл ҫапла пуҫлат̆: „Пирён крайра трактӑр-сем туса кӑлараҫҫё (Сталинград иккенне сисеҫҫё ёнтё ачасем), пирён крайран пётём Сойузёпе пиншер тоннӑ пулӑ сарӑлат̆ (Аҫтӑрхан иккенне систерет) т. ыт. те.

Ӑҫта ҫуралнине ыйтакан ҫапла каланипе шутласа хунӑ республикӑна пёлет, унӑн вырӑнне ҫуралнӑ ҫёршыв ҫинчен йуптарса каласа паракан ача пулат̆.

Ку вӑйӑ тёрлё республикӑсен економикипе, пуйанлӑхёпе т. ыт. те паллашас йенчен питё те паха, усӑлӑ.

## 46. „ҪУЛҪӲРЕН“

13—16 ҫулхи ачасем валђи.

**Выљакансен шучё**—отрйад.

**Вӑйӑ вырӑнё**—пӳлём, клас.

**Вăййă çапла иртет**: Выљакансем, „çулçӳренсĕр“ пуçне, пурте партă хушшинче ларaççĕ. „Çулçӳрен“ клас (йе пӳлĕм) варринче тăрать. Вăл хăйĕн çулçӳревĕ çинчен калама тытăнать, вăхăт-вăхăтпа йе пĕр, йе тепĕр ача çине кăтартать, вара вăл ачан тăрса кирлĕ сăмах хушмала та, татах лармала.

Калăпăр, выљакансем „Ленин пурнăçĕ“ йатлă темă илнĕ. „Çулçӳрен“ çапла пуçлать: „Епĕ Рaççей тăрăх çӳренĕ чухне тĕнчери пролетариатăн питĕ йуратакан çыннине“...—тет те пĕрин çине тĕллесе кăтартать. Кам çине тĕллесе кăтартнă, вăл: „Ленина“,—тет, малала та çаплах.

„Çулçӳрене“ лайăх нумай вуланă, нумай пĕлекен пионертан суйламала, вара вăйă аван иртет.

## 47. „ЛИТЕРАТĂРСЕМ“

13—16 çулхи ачасем валљи.

**Выљакансен шучĕ**—звено.

**Вăййă вырăнĕ**—звено пухăвĕ пухăнакан пӳлĕм.

**Вăййă çапла иртет**: Ачасем пурте карталанса ларaççĕ. Выљакансенчен пĕри пĕр-пĕр йапала çинчен калав пуçлать, анчах питрех интереслă тĕле çитсен, сăмахне каласа пĕтеричченех чарăнать. Унтан сылтăмра ларакан ача çав вăхăтра хăвăртрах калава малала калама пуçлать, ик-виç пуплев хыççăн йе нумайрах каласан чарăнать; унтан унăн кӳрши малала тăсать. Малала та çаплах иртет.

Час-часах калав пит аван иртет, мĕншĕн тесен кашни хăйĕн фантазине хушать.

Тата çапла **вариант** пулма пултарать. Вăйă çав йĕркепех иртет, анчах вăйă пуçланиччен вожа-

тăй кашни ачана пĕрер сăмах паратĕ (калăпăр, Ворошилăв, Перекоп, Врангĕл, Крым т. ыт. те). Калаçнă хушăра вожатăй панă сăмаха кашни ача хăйĕн калавĕпе çыхăнтармала.

### 48. „ХУДОЖНИКСЕМ“

10—13 çулхи ачасем валли.

**Выляканисен шучĕ**—2—5 ача.

**Вылямали вырăн**—сбор пухăнакан пӳлĕм.

**Вăййă çапла иртет:** Кашни ача пĕр хут татки çине çын, пулă йе кайăк пуçне тата măйне ӳкерет. Вăл ӳкерчĕкне (пуçне) лайăх хутлатса (пĕр икĕ тĕлте кăшт хăваратĕ) сулахайра ларакан кӳршине паратĕ.



11-мĕш ӳкерчĕк.

Лешĕ мĕнле ӳкерчĕкне пĕлмесĕрех хута илет те, таса вырăна çын, пулă йе кайăк (йе урăх йапала) кӳлепине тăватĕ. Унтан хутлатас тĕле тăватă пăнчă туса хутлататĕ, хутне тепĕр кӳршине паратĕ.

Виççĕмĕш ача пăнчăсен тĕлĕнчен урине, (вылăх урине, çын урине, кайăк т. ыт. те) тума тытăнатĕ. Пĕр-пĕр йапала урине тусассăн—ĕç пĕтет.

Хутлатнă хута сӳтеççĕ те „кам“ мĕн тунине пăхаççĕ—ачасем савăнса кулаççĕ. (11-мĕш ӳк.).

# АТРАКЦИОНЛӐ ВӐЙӐСЕМ

## 49. ПӖЧӖК АЕРОПЛАНСЕМ

10—16 çулхи ачасем валли.

**Выляканссен шуче**—1—5 ача.

**Кирлӗ хатӗрсем.** „П" саспалли йеверлӗ сӗтел çине икӗ йупа лартса, ӳкерчӗк çинче кӑтартнӑ пек тумала (12 ӳк.), çӳлӗшӗ 30 *см*, сарлакӑшӗ 35—40 *см* пулма тивӗçлӗ. Çийӗнчи патакки (шерти) çине пӗр-пӗрин хушшине пӗр пек хӑварса тӑватӑ пӗчӗк аеропланчиксем çакмала. (Аеропланчиксене йӑвӑçран тумала). Аеропланчиксем картонран касса тунӑ вырӑна вырнаçмала



12-мӗш ӳкерчӗк.

**Вăйă çапла иртет:** Выљакан ачан çип вĕçĕнчи аероплана картонран тунă фигурă ăшне сĕртĕнтермесĕр иртермеле, картонран тунă „хăвăл“ сылтăмран пĕчĕкленсе пыраť, çавăнпа та пирваÿхи хăвăла аеропланчика сĕртĕнтермесĕрех кĕртсе иртерсен 5 очко илет, иккĕмĕшĕшĕн—10, виççĕмĕшĕшĕн—15, тăваттăмĕшĕшĕн—20 очко илет. Выљакан аеропланчикне картона сĕртĕнтерсен, иккĕмĕш ача выљама пуçлаť. 60 очко выљаса илмеле пулсан, кам малтан тултараť, вăл выљаса илнĕ шутланаť.

## 50. УНКĂСЕМ

10—16 çулхи ачасем валљи.

**Выљакансен шучĕ**—1—4 ача.

**Кирлĕ хатĕрсем:** Фанерăран йе çӳхе хăмаран 12×8 *см* пысăкĕш арча тумала, çӳлĕшĕ 2,5 *см* ытла ан пултăр. Фанерă вырĕнне хулăмрах картон илсен те йураť. Арча тĕпне пĕр-пĕринчен пĕр пек хушă хăварса 1,5 *см* çӳлĕш йупасем çапса лартмала, калăпăр 5—6 йупа. Йупасене çирĕплетсе лартмала. Кусемсĕр пуçне тимĕртен йе йăвăçран тунă ункăсем хатĕрлемеле, вĕсене арча тĕпне пăрахмала. Арча питне кантăк лартмала.



13-мĕш ӳкерчĕк.

**Вăйă çапла иртет:** Выљакан кашни йупана, арчана йерипен силлесе, ункă тăхăнтарасшăн тăрăшаť. Ункăна йупа çине тăхăнтарма питех çă-

мăлах мар, мĕншĕн тесен пĕр ункине тăхăнтарсан, ыттисене тăхăнтарас тесе силлесен, йупа çинчи ункă та тухса ӳкме пултарать.

Йупасене, кашнине пĕр ункăпа мăшăрласа, пĕрпĕр тĕслĕ сăрăпа сăрламала (пĕрне хĕрлĕпе, теприне симĕспе т. ыт. те). Силлесе тăхăнтарнă чухне хĕрлĕ тĕслĕ йупа çине хĕрлĕ ункă тăхăнтармала, ыттисене те çавах.

## 51. ЛАБИРИНТ

10—16 çулхи ачасем вылЂи.

**ВылЂакансен шучĕ**—1—4 ача.

Ӳкерчĕкре кăтартнă пек (14-мĕш ӳк.) хăмаран лабиринт туса фанерăран йе картонран тунă арча ăшне вырнаçтармала. Арча пысăкĕшĕ 50-мĕш вăйăри арча пек пулсан йурать. Тата тăватă пăрçа (анчах типĕ те пĕр пек пăрçа тупмала) йе тимĕр йĕтре тупса лабиринт ăшне йамала.



14-мĕш ӳкерчĕк.

**Вăйă çапла иртет**: Ӳкерчĕк çинче кăтартнă пек йĕтресене хăйсен вырăнне хăваласа кĕртмеле.

Йĕтресене хăйсен вырăнне хăваласа кĕртесси пит çăмăл ĕçех мар.

## 52. ПАРАШŸТ

12—16 çулхи ачасем ваљљи.

**Кирлĕ хатĕрсем.** Вĕçекен парашŸт. Хамăрах тăвăпăр. Илĕпĕр 25 × 25 тăваткăл сантиметрлă хулăмрах хут. Вăл хута хутлатса виçкĕтеслĕ тăвăпăр (15 а-мĕш ŸК.); унтан тата икĕ хут виçкĕ-




15-мĕш Ÿкерчĕк.

теслетсе хутлатăпăр (15 б-мĕш Ÿк.). Кайран тепĕр хут хутлатса, витĕр шăтарса пăнчă йĕрĕпе хачăпа касăпăр, хута сарăпăр та парашŸт пулаť. (15 в-мĕш Ÿк.) 50 сантиметршар тăршшĕ 16 татăк çип касса хатĕрлĕр, кашнин вĕçне хут шăтăкĕнчен тирсе çыхса хурăр.

Халĕ ĕнтĕ, çипсен тепĕр вĕçне пĕр çĕре пухса, шăрпăк арчинчен тŸлесе çыхса хурăр. Шăрпăк

арчи йăвăртарах пултăр тесен, арча ăшне чул татăкĕ хума йурать. Акă ĕнтĕ парашўт хатĕр. Парашўта çил вĕçнĕ майлăн йарсан, вăл пит те çўле вĕççе кайма пултарать.

## 53. ВИРКĔНСЕ ИРТЕКЕН МИШЕН

13—16 çулхи ачасем валљи.

**Вылљакансен шучĕ**—2—6 ача.

**Вăййăра кирлĕ хатĕрсем**: кăшăл тата 2—6 пиртен çĕлесе тунă темиçе тĕслĕ мечĕк (пўске).

**Вăййă çапла иртет**: Плошчадкă çине йĕр тăваççĕ. Йĕр айккипе кашни метртан ачасем тăрса тухаççĕ. Вылљакансенчен пĕри йĕр вĕçĕнче тăрать. Вăл кăшăла илет те, „пуçла“ тенĕ командă хыççăн, кăшăла чĕртернĕ йĕрпе кустарса йарать.



16-мĕш ўкерчĕк.

Вăл вăхăтра айккинче тăракан ачасем кăшăл кусса килессе сыхласа тăраççĕ, ачасем патĕнчен кăшăл иртнĕ чухне вĕсем кăшăл витĕр мечкĕ ывăтаççĕ. Камăн мечки кăшăл витĕр тухаť, вăл пĕр очко илет.

Кăшăла 4-5 хут кустарса йараççĕ. Кам нумайрах очко илет, вал выљаса илнĕ шутланаť.

Кăшăла вирлĕн кустарса йамала.

## 54. ШĂНКĂРАВА ШĂНКĂРТАТТАР

12—16 çулхи ачасем ваљљи.

**Вăйă ваљљи кирлĕ хатĕрсем**: 3 шăнкăрав; 6—8 метрлă хулăм çип (шпагат) тата 3 метр тăршшĕ канат; резинă, йе пиртен çĕлесе тунă 5 мечкĕ.



17-мĕш ўкерчĕк.

**Вăййă çапла иртет**: Икĕ йупа тăрринче кашта. Йупасен çӳлĕшĕ 2,5—3,5 метр. Уйрăм шпагатсемпе виçĕ тĕлтен виçĕ шăнкăрав çакса йамала (хушши 30 *см*; шпагат тăршшĕ—1—1,5 *м*).

Выљакансем атракционтан виçĕ метрта тăраççĕ. Вĕсем черетпе кашни пиллĕкшер мечкă ывăтаççĕ, анчах шпагатран йе шăнкăравран лектерсен кăна (шăнкăрав шăнкăртатсан) ывăтни усăлă пулаť.

Кам нумайрах шăнкăртаттараť, вăл выљаса илет.

### 55 „ХАПХАРАН КĔРТ“

10—13 çулхи ачасем ваљљи.

**Выљакансен шучĕ**—1—10 ача.

**Вăйăра кирлĕ хатĕрсем**: Тикĕс хăма илсе, хăма çине тăхăр шăтăк тумала.




18-мĕш ӳкерчĕк.

Шăтăксене пурне те нумĕрлемеле. Кунсăр пуçне хытă çĕленĕ мечĕк кирлĕ. Вăл мечĕк шăтăк витĕр ирĕккĕнех тухмала.

Вăйă çапла иртет: Кĕпере хапхисемпе çĕр çине лартаççĕ, кĕпертен 4—6 утăмран йĕр тăваççĕ. Йĕр тепрĕ йенче выљакансем тăраççĕ. Выљакансем черетпе пиллĕкшер мечĕк ывăтса пысăкрах номĕрлĕ хапхинчен кăлараççĕ. Кам чи пирвай 100 çитерет, çав выљаса илет.

Ку вăйăна выљанă чухне ачасем икĕ ушкăна уйăрăлма та пултараççĕ.

## 56. „ЧАВКА ЧĔППИСЕНЕ ÇИТЕРНИ"

Хутран чавка пуçĕ туса кĕленче çăварĕ çине тăхăнтараççĕ. Чавка чĕппи умĕнче тăрса (ўкерчĕк çинче кăтартнă пек) ачасем чавка чĕппи çăварне пăрçа пăрахаççĕ.



19-мĕш ўкерчĕк.

## 57. „ÇĔРĔ ВИТĔР КĂЛАР“

Пысăках мар ункăна çиппе çыхса йăвăç çинчен (йе йупа лартса, кашта çинчен) çакса йарăр. Выљакан ачасем ункăран 5 утăмра тăраççĕ. Выљакан, ункă витĕр ирĕккĕн тухакан патак илсе, çигналпа ункă патне çывхарса пырать. Утса пынă чухнех патакне ывăтса ункă витĕр кăлармала. Туйана ункă витĕр ывăтса кăларма çăмăл пек, анчах туса пăхăр-ха!..



20-мĕш ўкерчĕк.

Ку вăййă пит çăмăлах мар, анчах унăн пахалăхĕ пысăк.

## 58. ХӐЙ ТӖЛЛӖН СИКЕКЕН МЕЧӖК

13—16 çулхи ачасем ваљљи.

Выљакансен шучӗ—2 ача.

**Вӑйӑ ваљљи** 2 метр тӑршшӗ пиçӗ кантра кирлӗ. Кантра вӗçӗсене 15—20 *см* патак çыхмала. Патак питех хулӑм пулмала мар, мӗншӗн тесен хулӑм патак алӑпа тытма лайӑх пулмасӗ. Кантра çине диаметрӗ 6 *см*-лӑ ункӑ тирмеле. Ункӑ кантра çинче лайӑх шуса çӳремеле, çавӑнпа та ункӑ йака пулмала. Ункӑран таршшӗ 65 *см*-лӑ çиппе пысӑк мар футбол—пӳске çакса йамала.



21-мӗш ӳкерчӗк.

**Вӑйӑ çапла иртет**: Выљакансем иккӗн пӗр-пӗрне хире-хирӗç тӑраççӗ, вӗсем сылтӑм аллисемпе патакран тытаççӗ, сулахай аллисемпе мечӗкне çапа-çапа йарса, пӗр-пӗрне мечӗкпе лектерме тӑрӑшаççӗ. Мечӗк тивсен, ӑна çийӗнчех калла тӗртсе йараканӗ пӗр очко илет.

Анах мечӗкне вăхăтра пӗлсе тӗртсе йанисӗр пуçне, кантрана та пӗлсе тытмала. Кантрана пушă тытма, çӗклеме, туртса илме пулаť, анчах çакна кăна манас пулмасť: футбол санăн умри ача патне кайса çапăнтăр. Кантрана алăран вӗçертме йурамасť, вăл алăран вӗçерӗнсен, вӗçертнӗ ача штраф тӳлет—унăн пӗр очко катăлаť.

---

### ÇАК КӖНЕКЕНЕ ÇЫРНĂ ЧУХ УСĂ КУРНĂ КӖНЕКЕСЕМ:


1. Е. И. ТИХЕЕВА—Игры и занятия малых детей.
2. И. ПАНОВА—Игры октябрят.
3. А. ВИШНЕВСКИЙ и Т. ПОПОВА—Игры юных пионеров.
4. Игры атракционы.
5. Журнал „Дошкольное воспитание.“


---

## ТУПМАЛИ:

*Стр.*

Умсӑмах . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3

**2—3 ҫулхи ачасен вӑййисем**

1. Пойӑс . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 5
2. Улма (паранкӑ) пухни . . . . . . . . . . . . . 5

**3—4 ҫулхи ачасен вӑййисем**

3. Аеропланcем . . . . . . . . . . . . . . . . . . 6
4. Автомобил . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 7
5. Йаҫли . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 7
6. Куйансем (мулкачсем) . . . . . . . . . . . . . 7
7. Ҫӑмӑр витӗр . . . . . . . . . . . . . . . . . . 8
8. Хӗрлӗ обоз . . . . . . . . . . . . . . . . . . 9
9. Конвейӗр . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 9
10. Йалав ҫӳретни . . . . . . . . . . . . . . . . 10

**Окӑабрйатсен вӑййисем**

11. Вӗсем ӑҫта пурӑнаҫҫӗ . . . . . . . . . . . . 10
12. Трактӑрсен колонни . . . . . . . . . . . . . 12
13. Пахча тусӗсем . . . . . . . . . . . . . . . . 13
14. Чукунҫул . . . . . . . . . . . . . . . . . . 15
15. Палаткӑсем . . . . . . . . . . . . . . . . . 16
16. Пурте пӗр ҫын пек . . . . . . . . . . . . . 17
17. Йӗр хыҫҫӑн . . . . . . . . . . . . . . . . . 18
18. Тилӗ чӑх йӑвинче . . . . . . . . . . . . . . 19
19. Картари мечӗк . . . . . . . . . . . . . . . 19
20. Башҫӑна тытса илни . . . . . . . . . . . . . 20
21. Туп . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 21
22. Мӗн улшӑннӑ кунта . . . . . . . . . . . . . 22
23. Кучченеҫ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 22
24. Ҫӗр, шыв, сывлӑш, кӑвар . . . . . . . . . . 23
25. Йалава туп . . . . . . . . . . . . . . . . . 24
26. Пиллӗке ҫити шут . . . . . . . . . . . . . . 25
27. Аеропланпа вӗҫни . . . . . . . . . . . . . . 25

Стр.
28. Пăравус . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 26
29. Куйан . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 27
30. Челюскинцăсем . . . . . . . . . . . . . . . . . 28

**Пионерсен вăййисем**

31. Ҫапла ту, капла ту . . . . . . . . . . . . . . 30
32. Хăвăртрах шухăшла . . . . . . . . . . . . . . 30
33. Йенлĕксем, кайăксем, пулăсем . . . . . . . . . 31
34. Чĕлхесĕрсем . . . . . . . . . . . . . . . . . 32
35. Домино Морзе . . . . . . . . . . . . . . . . . 32
36. Пĕр-пĕрне пĕлекенсем хирĕç пулни . . . . . . . 35
37. Виçĕ сăмах . . . . . . . . . . . . . . . . . . 36
38. Сăвăçсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 36
39. Пурне те пĕлекенскер . . . . . . . . . . . . . 37
40. Кам хăвăртрах . . . . . . . . . . . . . . . . 38
41. Китайла пуççавăрмăш . . . . . . . . . . . . . 38
42. Саспаллисенчен шарадă . . . . . . . . . . . . 40
43. Кино . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 42
44. Бум . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 43
45. Есĕр ăçта çуралнă? . . . . . . . . . . . . . . 44
46. Çулçӳрен . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 44
47. Литературсем . . . . . . . . . . . . . . . . . 45
48. Художниксем . . . . . . . . . . . . . . . . . 46

**Атракционлă вăйăсем**

49. Пĕчĕк аэропланcем . . . . . . . . . . . . . . 47
50. Ункăсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 48
51. Лабиринт . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 49
52. Парашӳт . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 50
53. Виркĕнсе иртекен мишен . . . . . . . . . . . . 51
54. Шăнкăрава шăнкăртаттар . . . . . . . . . . . . 52
55. Хапхаран кĕрт . . . . . . . . . . . . . . . . 53
56. Чавка чĕпписене çитерни . . . . . . . . . . . 54
57. Çĕрĕ витĕр кăлар . . . . . . . . . . . . . . . 55
58. Хăй тĕллĕн сикекен мечĕк . . . . . . . . . . . 56

---

Редактор К. АФАНАСЬЕВ.
Техн. редактор Н. ЯНГАС.
Послано в набор 2|VI 1936 г.
Подписано к печати 29|VI 1936 г.
Печатных листов—1,87. 47104 зн. в 1 печ. листе.
Заказ № 1711. Чувашгиз № 139.
Чувашлит № 1385. Тираж 5000 экз.

Типография № 2 Чувашгиза в гор. Алатыре, Чувашской АССР.

Цена 45 коп.
Хакĕ 45 пус

*И. Н. ДАВЫДОВ*

# ДЕТСКИЕ ИГРЫ

На чувашском языке

ЧУВАШИЗДАТ ◆ 1936